# Çĕршыва хӳтĕлесси –

**Ăна «Хăюлăхшăн» орденпа наградăланă**

## Унпа пирĕн шкул мухтанать



Чечен вăрçи пирки тĕрлĕ кинофильмсем сахал мар ӳкернĕ ĕнтĕ. Хăнăхрăмăр эпир вĕсене. Ку фильмсене пăхнă чух та ку вăрçă таçта аякра пулнă пек, пире пачах та пырса тивмен пек туйăнать. Анчах та Сергейшăн мар. Чечняри çапăçусем пирки каласа пама ыйтсан халĕ те унăн куçĕ шывланать. Ӳт-пӳ çинчи сурансем тӳрленнĕ пулин те, чунра юлнă сурансем тӳрленмеççĕ çав. Çапăçусенче çухатнă юлташсене епле манайăн?

«Эпĕ, Вастеев Сергей Сергеевич, 1980 çулхи январĕн 2-мĕшĕнче çуралнă». Çапла пуçлать хăйĕн автобиографине Сергей. Амăшĕ, Анна Игнатьевна Вастеева, ача амăшĕн медалĕпе наградăланнăскер, хальхи вăхăтра «Чувашия–Поддержка» страхлакан компанин страховани агенчĕ пулса ĕçлет. Ашшĕ Сергей Георгиевич Ярапайкасси шкулĕнче производство вĕрентĕвĕн маçтăрĕнче тăрăшать. Вĕсем 5 ача пăхса ӳстернĕ.

1984 çулта, Сергей 4 çул тултарсан, Вастеевсен çемйи Çармăс Республикинчен яланлăхах пурăнма Ярапайкассине куçса килет. 1987 çулта Сергей Ярапайкасси шкулĕн 1-мĕш класне кайнă. Хăйне вăл шкулта лайăх енчен кăна кăтартнă, «4» тата «5» паллăсемпе вĕренсе пынă. Ыттисемшĕн яланах класра тĕслĕх пулса тăнă. Спортпа туслă пулнă, уйрăмах йĕлтĕр спортне кăмăлланă. Спорт ăмăртăвĕсенче çĕнсе илнĕ дипломсемпе наградăсем те сахал мар.

1997 çулта Ярапайкасси шкулĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкарти 18-мĕш номерлĕ профессипе техника училищине вĕренме кĕнĕ. 1998 çулта ăна вăхăтран маларах вĕренсе пĕтерет, газоэлектросварщик профессине алла илет.

Çав çулах ăна çар службине илеççĕ. 1998-2000 çулсенче Сергей Çурçĕр Кавказ регионĕнчи çар чаçĕсенче службăра пулать. Отделени командирĕн тивĕçĕсене пурнăçлать, Дагестанри тата Чечняри çапăçусене хутшăнать. Чечняра Грозный хулине штурмланă чухне аманать.

1999 çулхи декабрь вĕçĕнче Раççей çарĕн чаçĕсем Грозный хулине кĕнĕ. Хулана штурмлама пуçланă. Раççей салтакĕсен хула условийĕсенче çапăçассипе опыт пулман пирки çухатусем сахал мар пулнă. Бронемашинăсемпе танксене пĕрин хыççăн теприне вут хыпнă. Боевиксем вара çак çапăçусене питĕ тĕплĕ хатĕрленнĕ пулнă.

Январĕн 3-мĕшĕ тĕлне вĕсем ушкăнра 12-ĕн юлаççĕ. Боевиксем çавăрса илнĕ пулин те, Сергей Вастеев отделенийĕ парăнмасть. Сакăр салтак, боевиксен аллине тыткăна лекес мар тесе, тарса тухма шутлать. Сергей вĕсене выртма хушать. Анчах кая юлнă ĕнтĕ. Саккăрăшĕ те пулемет çулăмĕ айне лекеççĕ. Виççĕн вара Сергея итлесе вырăнтах юлаççĕ, хăйсен пурнăçне сыхласа хăвараççĕ.

Пĕри вĕсенчен йывăр аманать, снаряд ванчăкĕ унăн урине татать. Сергей аманнисене урăх вырăна куçарать. Ку вăл администраци çуртĕнчи пĕчĕкрех пӳлĕм пулнă. Сергей тата унăн юлташĕсем 6 сехет хушши, 9 сехетрен пуçласа 15 сехетчен, боевиксен атакисене сире-сире яраççĕ.

Чӳречерен граната пăрахаççĕ. Вăл сирпĕнсе каять. Хăй те, аманнă пулин те, боевиксем пăшалтан персе тăнине пăхмасăр, юлташĕсене пулăшма васкать, суранĕсене çыхса ярать. Салтаксем вĕсене çăласса, пулăшу килессе шанаççĕ. Анчах та ăçтан пĕлнĕ-ха вĕсем ун чухне хăйсем чĕррисен шутĕнче пулманнине? Ку район боевиксен аллинче пулнă вĕт-ха.

Аманнă лейтенантăн чĕре таппине тĕрĕсленĕ чух Сергей ун çумĕнче кĕсье телефонне асăрхать. Телефонпа пулăшу чĕнет. Юлташĕсем танкпа вĕсене хăтарма пултараççĕ.

2000 çулта, чылай вăхăт госпитальте сывалнă хыççăн, Сергей сержант званипе запаса тухнă. РФ Президенчĕн Указĕпе ăна «Хăюлăхшăн» орденпа наградăланă.




Служба хыççăн Шупашкарти агрегатсем тăвакан заводра 5-мĕш разрядлă газоэлектросварщик пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра вара Мускавра хăйĕн специальноçĕпех Пысăк театра реконструкци тунă çĕрте тăрăшать.

Сергейăн юлташĕ каласа панă пĕр самант асăмран тухмасть. Сергей хăй Чечняра службăра пулни пирки пĕлтерсен, вăл ăна: «Вара мĕн?»- тесе хуравланă. Сергей вара шухăша путнă та нимĕн те чĕнмен.

Çавăн чухне Сергейăн чĕри епле ыратса илчĕ пулĕ. Хăйĕншĕн кăна мар, хăйĕн юлташĕсемшĕн те. Каялла чĕртсе тăратма çук юлташĕсемшĕн, тавраписем чурăс чунлă пулнишĕн.

Административлă структурăсен тимсĕрлĕхĕ те сисĕнет. Сергей наградăна икĕ çул иртсен кăна тивĕçет. Амăшне те аманни пирки çавăн чухне кăна каласа парать. Кам пĕлет, ун чухне пурин пирки те каласа пама та юраман пулĕ.

Сергей Вастеев паттăрлăхĕ вара çитĕнекен ăрушăн чăн-чăн тĕслĕх пулса тăрасса шанас килет.

**В. РОМАНОВ,**
**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ.**

## Пирĕн ентешсем



Çурлатринче çуралса ӳснĕ Константин Алексеевич Замятин Ярославльти аслă финанс çар училищине пĕтернĕ хыççăн 1979-1984 çулсенче инçетри çурçĕрти чикĕ хуралĕн финанс службинче тăнă. 1984-1995 çулсенче Федераллă чикĕ хуралĕн Мускав гарнизонĕнче тĕрлĕ должноçсенче тимлесе пирĕн ентеш РФ чикĕ службин академийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕн çумĕ таран ӳснĕ. Тивĕçлĕ канăва тухичченхи çулсенче РФ Хăрушсăрлăх службин академийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕнче тата тĕп бухгалтерĕнче службăра тăнă. Çар службинчи уйрăм тивĕçсемшĕн ăна 2,5 çул маларах "полковник" звани панă. Паян вăл Раççей Казначействин палăрăмлă участокне ертсе пырать.

---



Запасри подполковник Виталий Петрович Димитриев Уйкас Янасалта 1949 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче çуралнă. Шкул хыççăнах хими çар училищине вĕренме кĕнĕ. Алла диплом илсен вăл взвод, рота командирĕсенче, хими хӳтĕлевĕн уйрăм батальонĕн командир заместителĕнче тата штаб пуçлăхĕнче, артиллери тата танк полкĕсен хими службин пуçлăхĕнче, Туркестанри çар округĕн хĕç-пăшал склачĕн начальникĕнче, Ташкентри патшалăх техника университечĕн çар кафедрин преподавателĕнче тата аслă преподавателĕнче ĕçленĕ. "СССР Хĕç-пăшаллă Вăйĕсенче Тăван çĕршыва сыхланăшĕн" орден кавалерĕ çăмăл атлетикăпа, ирĕклĕ майпа кĕрешессипе СССР спорт мастерĕ.

---



Медицина службин подполковникĕ Эдуард Юрьевич Николаев Муркашра 1969 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче çуралнă. 1986 çулта Муркашри вăтам шкула кĕмĕл медальпе вĕçленĕ хыççăн вăл Санкт-Петербургри Çар медицина академине вĕренме кĕнĕ. Ăна "Сывату ĕçĕ" специальноçпе вĕренсе пĕтерсен тĕрлĕ вырăнсенче службăра пулать. Çав вăхăтрах хăйĕн пĕлĕвне ӳстерессипе тимлет. Çар Медицинин Академийĕнче "Хирургия" специальноçпе интернатура пĕтерет. Юлашки çулсенче Кемер облаçĕнчи Юрга хулинчи çар чаçĕнчи гарнизон госпиталĕн хирурги уйрăмĕн пуçлăхĕ пулнăскер, халĕ Алтай крайĕнчи Бийск хулинчи çар чаçĕн медицина пайĕн ертӳçи. Абхазинче Конституци йĕркине тытассипе çар опычĕ пур.

**Инçет авиаци штурманĕпе калаçатпăр**

## В. ГОРДЕЕВ: "Ачалăхри ĕмĕте пурнăçларăмах"



***Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен кунĕ умĕн Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Якаткассинче çуралса ӳснĕ, ачаран çар самолечĕпе вĕçме ĕмĕтленнĕ тата хăй тĕллевне пурнăçа кĕртнĕ Вячеслав Кузьмич Гордеевпа тĕл пулса калаçма тӳр килчĕ. Тивĕçе çавнашкал чунĕпе парăннă çынсем çĕршыва хӳтĕленĕ чух пĕр шикленмесĕр çывăрма, малашлăха пăхма пулать, вĕсем паянхи çамрăксемшĕн тĕслĕх пуласси пирки те шанчăк çуралать.***

**– Вячеслав Кузьмич, Сире пĕрре пăхсах Эсир тивĕçлĕ канура тесе калама та çук. Çĕршыв хӳтĕлевçисем ватăлмаççĕ-и вара?**

– Каларăр та ватлăх пирки. Çĕршыва çамрăксен сыхламалла. Ку тивĕç чи чыслисенчен пĕри пулнăран, Турри хăй те ватăлтармасть пулмалла çĕршыв хӳтĕлевçине. Эпĕ паян 55 çулта, хĕсметре 21 çул тăнă хыççăн 1991 çулта тивĕçлĕ канăва тухрăм. Çапла калатăп-ха та, анчах тĕлĕкре çав-çавах сасăран пысăкрах хăвăртлăхлă самолетпа çар заданийĕсене тухатăп. Мĕн тăвас ĕнтĕ, чунăмпа эпĕ халĕ те инçет авиаци штурманĕ.

**– Чăваш ялĕнче, трактор-машинăран хăватлăрах техника çук енре çуралса ӳснĕ чăваш ачи инçет авиаци штурманĕ пулни маншăн хăйне евĕр вăрттăнлăх. Унăн тупсăмĕ мĕнре-ши?**

– Кунта пат татса калама йывăртарах. Ачалăхра çуралнă тата ӳснĕçемĕн аталанса пынă пĕрремĕш ĕмĕт ку манăн. Тăван тавралăха ăнланма вĕренсенех тӳпере вĕçекен самолетсем манăн шĕл кăвар чунăма хăйсем патне илчĕç. Ачаллах ăнлантăм, пурăнаймастăп эпĕ вĕсемсĕр. 10-11 çулсенче мана атте-анне час-часах аппа патне Шупашкара яратчĕ. Сăмах вĕççĕн майĕпен аэропорта епле çитмеллине ыйтса пĕлнĕ хыççăн аппа ĕçе кайнă чух мана мороженăй илме парса хăварнă укçапа аэропорта каяттăм, куç ывăниччен тата хырăм выçиччен самолетсем çине пăхаттăм, шухăшпа кабинăна кĕрсе ларattăм та тӳпене çĕкленеттĕм, сенкер океанра пĕр çаврăм тунă хыççăн лăпкăн хам вырăна таврăнаттăм. Киле таврăннă чух çул çинче тира кĕрсе пăшалпа пересси те маншăн пысăк интересчĕ. Ачалăхри тепĕр пулăм та асрах-ха. Пĕррехинче Çуткӳл патĕнчи хире самолет анса ларчĕ. Ăна тытса пăхма тесе 2-3 çухрăма çиçĕм пек хăвăртлăхпа чупса тухрăм. Самолетпа кăсăкланни майĕпен пысăк туйăма çаврăнчĕ.

**– Пурнăç çулне суйлас ĕçре сире хирĕçлекенсем пулмарĕç-и?**

– Кунта "çапла" тесе пĕр енлĕ хурав парас килмест. Ачалăх ĕмĕтне пурнăça кĕртме çăмăл пулман паллах, анчах çирĕп тĕллев çĕмренрен те вăйлăрах пулчĕ. 10-мĕш класра призыв комиссийĕсене çӳреме пуçласан çар комиссариатĕнче летчиксен училищине вĕренме кайма заявлени патăм. Çак тĕллевпе медицина тĕрĕслевĕсем тăнă чух мана вĕçев училищинчен пăрăнса ытти училищĕсене кайма сахал мар сĕнӳ пулчĕ. Анчах эпĕ никампа та килĕшмерĕм: манăн сенкер тӳпе айĕнче вĕçмелле. Хам çине тăнине кура медиксем юлашкинчен манăн шухăшĕмĕтпе килĕшсе эпир штурмансем хатĕрлекен Челябинскри аслă çар авиаци училищи çинче чарăнтăмăр. Эпĕ службăра 21 çул тăтăм, темĕнле лару-тăрура та çĕршыв умĕнчи тивĕçе мала тăратрăм. Çапла вара пурнăç çулне эпĕ хам суйларăм, суйларăм та йăнăшмарăм.

**– Вячеслав Кузьмич, 21 çул вăл 21 кун мар. Хăш регионсенче службăна ирттерме тиврĕ Сире, мĕнле самолетсем çинче çар заданийĕсене вĕçрĕр?**

– Салтак присяга парать те çĕршыв хушнă çĕрте службăна ирттерет. Манăн вара шăпа пӳрнипе службăна пĕтĕмпех Украинăра ирттерме тиврĕ. Малтанхи 4 çула Киев облаçĕнчи Белая Церковь хулинче 3,5 пин километра вĕçекен ТУ-16 корабль (пысăк самолетсене хисеплесе çапла калаттăмăр) штурманĕнче службăра тăтăм. Хыççăн, Чернигов облаçĕнчи Нежин хулине куçсан, ТУ-22 бомбардировщик-ракетоносецсене алла илтĕмĕр. Ку корабль малтанхинчен хăватлăрахчĕ: сывлăшра заправка тунипех инçе-инçе вĕçейретчĕ, летчиксен сывлама кислород пĕтиччenех.

**– Инçе çулта темĕн те курма тивнĕ ĕнтĕ...**

– Унсăр пулмасть паллах. Анчах училищĕре тарăн пĕлӳ илни, хамăр ĕçе юратни йывăрлăхсене çĕнме пулăшатчĕç. Хампа пулса иртнĕ икĕ тĕслĕх асран тухмаççĕ. Иккĕшĕ те ТУ-16 бомбардировщик-ракетоносецпа вĕçнĕ чух пулнăччĕ. Пĕррехинче 1000 метр çӳллĕшĕнче пĕр енчи двигатель ĕçлеме чарăнчĕ. Командирпа экипаж пĕр çын пек ĕçлени тата командир вăхăтра двигателе чарни кăна самолета сыхласа хăварма май пачĕ. Çĕр çине анса ларнă хыççăн специалистсем тĕрĕслесен çеç пирĕн самолет çинче взрыв пуличчен 2-3 çеккунт çеç юлнине пĕлтĕмĕр. Акă ăçта вăл туслăхпа ăсталăх çимĕçĕ. Ку ĕç Крым çурма утравпа Азов тинĕсĕ çинче пулса иртрĕ. Самолета сыхласа хăварнăшăн Инçет авиаци командующийĕ командира ятлă сехет, мана Тав çырăвĕ парса чыс турĕ. Тепрехинче 9 самолет аслатиллĕ çумăр хыççăнхи сывлăш вылявне (нисходящие и восходящие потоки) лекрĕмĕр. Пĕр ретре пыракан самолетсем самантрах çулçă пек çаврăнма пуçларĕç. Вĕсене ниепле те тытса чарма çук, анчах çак йывăрлăхран та эпир çухатусемсĕр тухма пултарни паян та мана тĕлĕнтерет.



К.И. Терентьев.

**– Пĕлес килет, нумайăн-и-ха Якаткассинчен çар ĕçне суйласа илнисем?**

– Пурне те пĕлетĕп тесе калас килмест, анчах май пур чухне çаксем çинчен каласа хăварам-ха. Константин Иванович ТЕРЕНТЬЕВ. 1966 çулта çуралнăскер, 1983 çулта Чуманкассинчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă. 1990 çулта Камышинскри Аслă çар училищине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 2000 çулта Санкт-Петербургри тылпа транспорт çар академийĕнчен ăнăçлă пĕлӳ илсе тухнă. Командир должноçĕсенче ĕçлесе Константин Иванович службăна уйрăм батальон командирĕнче вĕçленĕ.

Юрий Иванович ТЕРЕНТЬЕВ. 1967 çулта çуралнă каччă действительнăй çар служби хыççăн прапорщиксен шкулĕнче вĕренсе паян та службăна малалла тăсать. Паян вăл мотострелковăй полкри взвод командирĕ.



Ю.И. Терентьев.

Владимир Николаевич АНДРЕЕВ. 1963 çулта çуралнăскер, 1980 -1984 çулсенче Энгельсри зенитпа ракетăн Аслă çар училищине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн паян Амур облаçĕнчи Свободный хулинче службăра тăрать. Майор.

Валерий Иосифович ТИМОФЕЕВ. 1961 çулта çуралнăскер, действительнăй çар служби хыççăн çар ретĕнче юлнă. 1981 çултанпа прапорщик. Паян Калининград хулинче службăра тăрать.

Анатолий Дмитриевич ИВАНОВ. Чăваш патшалăх университетĕнче çар кафедрине вĕренсе пĕтерсе офицер званине илнĕ хыççăн çара кайнă. Чылай хушă Бойконурта службăра тăнă. Чечняри бандформированисемпе çапăçнă çĕре хутшăннă. Паян Мускаври çар академийĕнче вĕрентет.

**А. ПЕТРОВ.**